26-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус

1943 ОКТЯБРӖН 19 ЫТЛАРИКУН 208(6445) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

Чӑваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМӖН ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Совет Информаци Бюровӗнчен

ОКТЯБРӖН 16-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Пирӗн ҫарсем, тӑшманӑн йышлӑ пехотипе танкӗсен контратакисене сире-сире ярса, МЕЛИТОПОЛЬ хулин урамӗсенче ҫапӑҫнӑ. Тӑшман ҫынсемпе техника тӗлӗшӗнчен калама ҫук пысӑк ҫухатусем тӳснӗ. Пирӗн ҫарсем МЕЛИТОПОЛЬ хулин кӑнтӑр-хӗвеланӑҫ пайӗнче кӑна тӑшман контратакисене сире-сире янӑ чух нимӗҫсен 40 танкне ытла пӗтерсе тӑкнӑ.

ЗАПОРОЖЬЕ хулинчен кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем, наступлени туса пырса, 5 километртан пуҫласа 10 километр таран малалла куҫнӑ. ЯНЧЕКРАК, ЖЕРЕБЯНКА, ЛУГОВОЙ, ЛЕСНОЙ, ГРОЗОВ, ГЛАДКИЙ ятлӑ ялсене йышӑнса илнӗ.

КРЕМЕНЧУГ хулинчен кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн ҫарсем ДНЕПР шывӗн сылтӑм енчи плацдармсене аслӑлатасшӑн ҫӗнӗрен ҫапӑҫма пуҫланӑ. Тӑшман хаяррӑн хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкса, 5 километртан пуҫласа 10 километр таран малалла куҫнӑ, темиҫе яла йышӑнса илнӗ. Тӑшманӑн танксемпе авиаци пулӑшса пынипе тунӑ темиҫе контратакине сирсе янӑ, ӑна пысӑк ҫухатусем кӳнӗ.

ДНЕПР шывӗн вӑтам тӑрӑхӗнче, юханшывӑн сылтӑм енче, Киев хулинчен ҫурҫӗртерехре, пирӗн ҫарсем хӑйсен плацдармӗсене аслӑлатасшӑн ҫапӑҫнӑ, хӑйсен позицийӗсене лайӑхлатнӑ.

ГОМЕЛЬ хулинчен кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем ҫапӑҫса малалла куҫнӑ, хӑйсен позицийӗсене лайӑхлатнӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче вӑйлӑн разведка тунӑ тата тупӑсемпе, минометсемпе хирӗҫ-хирӗҫ персе тӑнӑ.

Октябрӗн 15-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем пур фронтсенче те нимӗҫсен 81 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата ҫӗрелле перекен артиллери тӑшманӑн 76 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Мелитополь хулинче пирӗн ҫарсем урамсенче ҫапӑҫнӑ. Тӑшман фронтӑн ытти участокӗсенчен пехотӑпа танксен пысӑк вӑйӗсене татти-сыпписӗр илсе пырать те вӗсене контратакӑна кӗрте-кӗрте ярать. Урамсенче хаяррӑн ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн (ҫапӑҫнӑ вӑхӑтра час-часах алӑ [illegible]) пирӗн ҫарсем хулан чылай кварталне [illegible] тасатнӑ. 2.000 гитлеровеца ҫити вӗлерсе пӗтернӗ. [illegible] Совет артиллеристӗсемпе бронебойщикӗсем хулан кӑнтӑр-хӗвеланӑҫ пайӗнче нимӗҫсен 40 танкне ытла персе тӑкнӑ. [illegible] пирӗн артиллери тӑшманӑн 28 орудине, [illegible] 6 минометне тата 120 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Запорожье хулинчен кӑнтӑртарахра пӗр соединени чаҫӗсем, тӑшман [illegible] рубежӗсене [illegible] ҫӗмӗрсе тӑкса, малалла куҫнӑ, темиҫе яла тытса илнӗ. Пӗр участокра нимӗҫсем, минометсемпе пулеметсемпе вӑйлӑн персе тӑрса, пирӗн наступлени туса пыракан подразделенисене чарма тӑнӑ. [illegible] 13 миномет, 42 пулемет, тата боеприпассем нумай пӑрахса хӑварнӑ. Тепӗр участокра пирӗн ҫӑмӑллӑн куҫса пыракан отрядсем тӑшман пехотин батальонне аркатса тӑкнӑ, темиҫе яла тытса илнӗ.

Пирӗн летчиксем тӑшман ҫарӗсене [illegible] Нимӗҫ авиацийӗ ҫӗр ҫинчи Никополь чугун ҫул станцийӗнчи [illegible] бомбӑсем пӑрахнӑ. [illegible] 4 поезд ҫӗмӗрнӗ. [illegible]

Днепр шывӗн сылтӑм енче, Кременчуг хулинчен кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре, пирӗн ҫарсем тӑшмана атакӑланӑ та хаяр ҫапӑҫу хыҫҫӑн тӑшманӑн вӑйлӑ тӗреклетнӗ позицийӗсене тытса илнӗ. Ҫитӗнӗве малалла сарса пырса, совет боецӗсем ӑнӑҫлӑн малалла куҫнӑ та темиҫе яла тытса илнӗ. Нимӗҫсем хӑйсен ҫухатнӑ вырӑнсене тепӗр хут йышӑнма хӑтланни ӑнӑҫман. Тӑшман контратакисене сире-сире пырса, пирӗн ҫарсем унӑн 25 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е ҫунтарса янӑ. Нимӗҫ пехотине пӗр полка ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Трофейӑсем тытса илнӗ. 250 ҫынна ытла тыткӑна илнӗ.

* * *

Днепр шывӗн вӑтам тӑрӑхӗнче, сылтӑм енче, пирӗн ҫарсем, ҫапӑҫса, хӑйсен позицийӗсене лайӑхлатнӑ. Киевран ҫурҫӗртерехре пирӗн ҫарсем пӗр кун хушшинче 1.000 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла вӗлерсе пӗтернӗ. Иртнӗ эрне хушшинче пӗр соединени чаҫӗсем тӑшман пехотин, танкӗсен тата хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупписен 200 контратакине ытла сирсе янӑ. Тӑшман контратакисене сире-сире ярса, ҫав соединени чаҫӗсем утӑм хыҫҫӑн утӑм малалла куҫса пынӑ, нимӗҫсен 8.000 салтакӗпе офицерне ытла вӗлерсе пӗтернӗ, 176 танк, 187 тупӑ, 400 пулемет ытла пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Гомель хулинчен кӑнтӑртарахра пӗр соединенин чаҫӗсем малалла куҫса пынӑ, хӑйсен позицийӗсене лайӑхлатнӑ. Нимӗҫсем вӑйлӑн персе тӑнӑ тата темиҫе хут та контратака тунӑ. Пирӗннисем тӑшманӑн пур контратакине те пысӑк ҫухатусем кӳрсе сирсе янӑ. Тӑшман 800 салтакне ытла вӗлерсе пӗтернӗ, 27 тупӑ, 95 пулемет тата ҫар хатӗрӗсем тиенӗ пыракан 60 автомашинана персе тӑкнӑ. Гомельтен ҫурҫӗртерехре те артиллери вӑйлӑн персе тӑнӑ.

* * *

Балти тинӗсӗнче тӑшманӑн 1.500 тонна тиекен судине путарнӑ.

* * *

Витебск облаҫӗнчи районсенчен пӗринче кӗрешекен партизансен отрячӗ 3 пысӑк ялти нимӗҫ гарнизонӗсене тапӑннӑ. Ҫавӑн чухне партизансем 400 салтакпе офицерне вӗлерсе пӗтернӗ. Партизансем 5 танк, 16 автомашина, 36 мотоцикл пӗтерсе тӑкнӑ. Совет патриочӗсем 3 тупӑ, 36 пулемет, 270 винтовка тата боеприпассем нумай тытса илнӗ. Витебск облаҫӗнчи тепӗр отрячӗ 9 нимӗҫ автомашинине [illegible] пӗтерсе янӑ, 86 гитлеровеца вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Нимӗҫсен 57-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 164-мӗш полкӑн 11-мӗш ротинчен Днепр шывӗн сылтӑм енне пирӗн енне каҫнӑ ефрейтор Рудольф Келлер ҫапла каласа панӑ: «Белгородран пуҫласа Днепр патне ҫитиччен чакса пынӑ чухне пирӗн дивизи калама ҫук пысӑк ҫухатусем тӳснӗ. Днепр шывӗн сылтӑм енне каҫнӑ хыҫҫӑн пирӗн 164-мӗш полкра 4 ротӑччӗ. Ҫак ротӑсенче мӗн пурӗ 115 ҫыннччӗ. Салтаксем хуть те мӗн пулсан та Днепр шывӗн сылтӑм енне каҫасшӑн пулчӗҫ. Кашниех ҫӑлӑнӑҫ юханшывӑн тепӗр енче ҫеҫ тесе шутланӑ. Пирӗн офицерсем: ҫав юханшыв урлӑ пӗр вырӑс салтакӗ те каҫаймӗ, тесе ӗнентеретчӗҫ. Анчах та темиҫе кунтан вырӑссем Днепр шывӗ урлӑ каҫрӗҫ те кӗтмен ҫӗртен пирӗн полкӑн тылне пырса кӗчӗҫ. Вырӑссем ҫакӑн пек сарлака шыв урлӑ хӑвӑрттӑн каҫассине никам та кӗтмен. Пирӗннисем ҫав тери хӑраса ӳкрӗҫ. Салтаксем сехӗрленнипе: «Пире ҫавӑрса илчӗҫ, эпир миххе кӗрсе ӳкрӗмӗр», тесе кӑшкӑрашма тытӑнчӗҫ. Ҫапӑҫусем Днепр шывӗн сылтӑм енне куҫнӑ хыҫҫӑн пирӗн ӗҫ пӗтсе ларчӗ ӗнтӗ, тесе шутларӑм та эпӗ, салтаксен пӗр ушкӑнӗпе пӗрле тыткӑна парӑнтӑм».

ОКТЯБРӖН 17-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Пирӗн ҫарсем, тӑшман пехотипе танкӗсен контратакисене сире-сире ярса, МЕЛИТОПОЛЬ хулин урамӗсенче ҫапӑҫнӑ. Иртнӗ кунсенчи пекех, тӑшман ҫынсемпе техника тӗлӗшӗнчен калама ҫук пысӑк ҫухатусем тӳснӗ.

ЗАПОРОЖЬЕРЕН кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем темиҫе яла ҫапӑҫса тытса илнӗ. Вӗсем хушшинче КРИНИЧЕВАТЫЙ, ВЕРХНЯЯ КРИНИЦА, НИЖНЯЯ КРИНИЦА ятлӑ пысӑк ялсем тата ПОПОВО ятлӑ чугун ҫул станцийӗ пур.

КРЕМЕНЧУГ хулинчен кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре икӗ кун вӑйлӑн ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн пирӗн ҫарсем ДНЕПР шывӗн сылтӑм енче тӑшманӑн вӑйлӑ тӗреклетнӗ оборонине 45 километр сарлакӑш татса, 25 километр шалалла кӗрсе кайнӑ та вӑйлӑ тӗреклетнӗ темиҫе яла тытса илнӗ. Вӑл шутра КАМЕНИСТАЯ, АФАНАСЬЕВКА, ПОПЕЛЬНАСТОЕ, БУДЕННОВКА, ЛИХОВКА ятлӑ ялсене илнӗ.

КИЕВРАН ҫурҫӗртерехре пирӗн ҫарсем тӑшман пехотипе танкӗсен контратакисене сире-сире янӑ, ДНЕПР шывӗн сылтӑм енчи плацдарма аслӑлатасшӑн ҫапӑҫнӑ, хӑйсен позицийӗсене лайӑхлатнӑ.

ГОМЕЛЬТЕН кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем ДНЕПР шывӗ урлӑ ӑнӑҫлӑн каҫнӑ та тӑшман оборонине 20 километр сарлакӑш татса, 5 километртан пуҫласа 10 километр таран шалалла кӗрсе кайнӑ. Гомель облаҫӗнчи район центрне ЛОЕВ хулине тата КОЗАРОГИ, КРУПЕЙКИ, ЩИТЦЫ, БЫВАЛКИ ятлӑ ялсене тытса илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче вӑйлӑн разведка тунӑ тата артиллерипе минометсенчен персе тӑнӑ.

Октябрӗн 16-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем пур фронтсенче те нимӗҫсен 139 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата ҫӗрелле перекен артиллери тӑшманӑн 64 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Мелитополь хулинче ҫапӑҫнӑ урамсенче ҫапӑҫнӑ. Тӑшман пехотӑпа танксен тата хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑсен вӑйӗсемпе темиҫе хут та контратака тунӑ. Пирӗн ҫарсем нимӗҫсен пур контратакисене те сирсе янӑ, 1.000 гитлеровеца ҫити вӗлерсе пӗтернӗ. [illegible] 4 туппине персе ҫӗмӗрсе е ҫунтарса янӑ. [illegible] тытса илнӗ. Гитлеровецсене икӗ батальона ҫити вӗлерсе пӗтернӗ. Хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 2 тупӑ, 17 хир туппи, 62 пулемет тата боеприпассен складне тытса илнӗ.

* * *

Запорожье хулинчен кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем малалла куҫса пынӑ, [illegible]

* * *

Гомель хулинчен кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем Днепр урлӑ ӑнӑҫлӑн каҫнӑ та [illegible] Лоев хулине тытса илнӗ. [illegible]

* * *

Ленинград облаҫӗнчи районсенчен пӗринче кӗрешекен партизансен отрячӗ [illegible]

* * *

Кременчугран кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре, Днепр шывӗн сылтӑм енче, [illegible]

Тӑшман пирӗн малалла куҫса пыракан ҫарсене чарма йышлӑ авиаци янӑ. Совет летчикӗсем ҫӗр ҫинчи чаҫсене шанчӑклӑн хӳтӗлесе пынӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче вӗсем нимӗҫсен 36 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Киев хулинчен ҫурҫӗртерехре пирӗн ҫарсем, тӑшман контратакисене сире-сире ярса, Днепр шывӗн сылтӑм енчи плацдарма аслӑлатасшӑн ҫапӑҫнӑ, хӑйсен позицийӗсене лайӑхлатнӑ. Нимӗҫ пехотипе тата танкӗсен пысӑк вӑйӗсем пирӗн пӗр чаҫӑн флангне кӗрсе кайма хӑтланнӑ. Совет боецӗсем, тӑшмана тапӑклӑн пырса ҫапнӑ та каялла ыватса янӑ, 900 нимӗҫ салтакӗпе офицерне вӗлерсе пӗтернӗ, 12 танк, хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 2 тупӑ пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр участокра пӗр соединени чаҫӗсем, хаяррӑн ҫапӑҫса, паха позицисем [illegible] нимӗҫ салтакӗпе офицерне вӗлернӗ. Нимӗҫсен 50 танкне, вӑл шутра «пантера» йышши 17 танкне тата «тигр» йышши 8 танкне, персе ҫӗмӗрнӗ е ҫунтарса янӑ. Трофейӑсем тытса илнӗ тата тыткӑна илнӗ.

* * *

Аялтарахра Краснодар крайӗнчи Варениковская станицинче нимӗҫсен фашистла захватчиксен тискер [illegible] акт ҫырнӑ. [illegible] пынипе, ҫак станицӑри мирлӗ халӑха пӗр ҫултилӗк хушши мӑшкӑлласа пурӑннӑ, вӗсене ҫаратнӑ, вӗлернӗ, вӗсен пурлӑхӗсене пӗтерсе тӑкнӑ. Станицӑна фашистла захватчиксенчен ирӗке кӑларнӑ хыҫҫӑн Гостагаевская станици патнелле каякан ҫул ҫинче танксене чарма алтнӑ шӑтӑкра нимӗҫ пуҫкасаканӗсем тискеррӗн асаплантарса вӗлернӗ совет ҫыннисен 500 виллине тупнӑ. Персе вӗлернисем хушшинче Васильев тракторист, Смирнова учительница, колхоз председателӗ Кондратенко, агротехник Мартиненко тата ыттисем те пур. Персе вӗлерессипе хӑратса, нимӗҫ вӑрӑ-хурахӗсем ялта пурӑнакансенчен ҫуррине яхӑн Германие каторгӑлла ӗҫе хӑваласа кайнӑ.

Пирӗн станицӑра пурӑнакансен ячӗпе тата вӗсем хушнипе Кубань казакӗсене тата Хӗрлӗ Ҫар боецӗсене тӑшман пирӗн ирӗклӗ ҫӗршывра калама ҫук хӑрушӑ ӗҫсем тунӑшӑн ӑна хытӑ тавӑрма ыйтатпӑр».

Акт ҫине станицӑра пурӑнакансем А. Григорьева, К. Посыпай, П. Кольницкая, Г. Фортушин, Бабкин тата ыттисем те алӑ пуснӑ.

Йывӑҫ лартма тытӑнчӗҫ

ОКТЯБРЬСКОЕ. (Телефонпа). Чкаловски районри комсомолецсем тата учительсемпе шкул ачисем кӑҫалхи кӗркунне ҫимӗҫ йывӑҫҫисем лартса хӑварма Чӑваш республикинчи комсомолецсем тата шкул ачисемпе учительсем патне чӗнсе ҫыру ҫырнӑччӗ. Ҫак ҫырӑва пирӗн районри комсомолецсемпе шкул ачисем хавасланса кӗтсе илчӗҫ. Ӑна комсомолецсен пухӑвӗсенче, отрядсен сборӗсенче сӳтсе яврӗҫ. Октябрьскинчи, Ҫатракассинчи, Шупашкар-Есмӗлти шкул ачисемпе учительсем кашниех 5-шер тӗп улмуҫҫи йывӑҫҫи, 10-шар тӗп ҫырла йывӑҫҫи лартма пулчӗҫ. Халӗ вӗсем шӑтӑксем чавма тытӑнчӗҫ. Улмуҫҫи тата ҫырла йывӑҫҫисене «Чӑваш Обкомӗ» колхозран илсе пыраҫҫӗ.

А. ПЕТРОВА,
ВЛКСМ райкомӗн секретарӗ.

ССР Союзӗн Великобританири посолӗ Гусев юлташ VI Георг короле хӑйӗн верительнӑй грамотисене пани

ЛОНДОН, октябрӗн 15-мӗшӗ. (ТАСС). Рейтер агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, паян Англи королӗ VI Георг Букингем дворецӗнче ССР Союзӗн Великобританири чрезвычайнӑй тата полномочнӑй посолне Гусев юлташа йышӑннӑ. Гусев юлташ VI Георг короле хӑйӗн верительнӑй грамотисене панӑ.

Отечественнӑй вӑрҫӑ фрончӗсенче

Мелитопольри вӑйлӑ ҫапӑҫусем

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, октябрӗн 16-мӗшӗ. (ТАСС спецкорӗ). Хула кварталӗсенче хаяр ҫапӑҫусем вӗҫӗмсӗр пыраҫҫӗ. Тупӑсем кӗрлени пӗр чарӑнмасӑр янӑраса тӑрать. Сайра-хутра кӑна пулеметсем шатӑртатни, миномет сассисем илтӗнсе каяҫҫӗ. Фашистсен самолечӗсен пысӑк мар ушкӑнӗсем пирӗн тапӑнса пыракан ҫарсене малалла куҫма чӑрмантарасшӑн. Тӑшман Крым патне пымалли ҫулсем ҫинчи Мелитополь рубежне мӗнле пулсан та хӑй аллинче хӑварма тӑрӑшать. Гитлерла командовани хӑйӗн салтакӗсене пӗр ҫын юлмиччен ҫапӑҫма хушать. Ҫакна пурнӑҫа кӗртес тесе, салтаксем хыҫӗнче уйрӑм отрядсем тӑраҫҫӗ. вӗсем таракан салтаксене ҫеҫ мар, хӑйсем йышӑннӑ позицирен темиҫе метр каялла чакакансене те персе пӑрахаҫҫӗ.

Пирӗн чаҫсене кашни утӑмрах ҫӗнӗ те ҫӗнӗ укрепленисем пӳлсе тӑраҫҫӗ. Ҫав укрепленисене пехота, танксем, хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑсем тата артиллери хӳтӗлесе тӑраҫҫӗ. Совет боецӗсем, пур чӑрмавсене те сирсе пӑрахса, малалла куҫаҫҫӗ.

Хула патне мӗн чухлӗ ҫывӑхарах пыратӑн, тупӑсем кӗмсӗртетни ҫавӑн чухлӗ хытӑрах илтӗнет. Тӑшман вӑйлӑн хирӗҫ тӑрать. Анчах пирӗн боецсем Мелитополь ҫӗрне гитлеровецсенчен ытларах та ытларах тытса илеҫҫӗ. Акӑ, Молочная шывӗ урлӑ каҫмалли вырӑнсем. Кунта темиҫе кун каярах ҫеҫ хаяр ҫапӑҫусем пынӑ. Халь пысӑк мар кӗпер урлӑ хула патнелле ҫар хатӗрӗсем тиенӗ машинӑсем, ҫӗнӗрен хушса панӑ вӑйсем каҫаҫҫӗ. Сывлӑшра истребительсем хуралласа ҫӳреҫҫӗ. Хула хӗррине ирӗке кӑларни виҫӗ кун иртрӗ. Халь ҫапӑҫусем Мелитополь хулин варринче пыраҫҫӗ.

Эпир хулан халь ҫеҫ ирӗке кӑларнӑ урамӗсемпе пыратпӑр. Кунта пур ҫӗрте те кӗрешӳ хаярлӑхӗпе сывлать, урамсем пушӑ. Ҫуртсен стенисем ҫинче снаряд ванчӑкӗсен, пулемет пульлисен йӗрӗсем палӑраҫҫӗ. Нумай ҫуртсене гитлеровецсем ҫӗмӗрсе пӗтернӗ. Кантӑк ванчӑкӗсем, кирпӗч ҫуртсен ишӗлсе аннӑ стенисем, кил-ҫуртра тыткаламалли япала ванчӑкӗсем взрыв вӑйӗпе протуарсем ҫине тухса ӳкнӗ. Пур ҫӗрте те нимӗҫ салтакӗсен виллисем выртаҫҫӗ. Пушӑ урамсем тӑрӑх танксене пемелли орудисем кӑкарнӑ «форд-сем» ирте-ирте каяҫҫӗ. Артиллеристсем, тӑшмана урӑх ҫӗртен пырса ҫапмашкӑн, хӑйсен вырӑнӗсене улӑштараҫҫӗ.

Мелитополь хулин тытса илнӗ кашни ҫуртӗнче, кашни кварталӗнче хаяр ҫапӑҫусем пынӑ, унта пирӗн тӑван ҫӗршывӑн паттӑр воинӗсем совет хӗҫпӑшалне чапа кӑларнӑ. Хулан кӑнтӑр хӗррипӗн ҫапӑҫнӑ чухне пирӗн ҫарсем кунне нимӗҫ пехотин 11-шер контратакине сире-сире янӑ, ҫав контратакӑсене нимӗҫсен танкӗсем тата хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупписем пулӑшса пынӑ. Совет боецӗсем, тӑшмана сире-сире ярса, хӑйсем наступление куҫнӑ, нимӗҫсене йышӑннӑ вырӑнсенчен ҫапа-ҫапа кӑларнӑ.

Белкин сержант нимӗҫсенчен тытса илнӗ участокра пилӗк боецпа пӗрле ҫирӗпленсе ларнӑ. Нимӗҫсем ҫав паттӑрсен пӗчӗк ушкӑнне тапӑннӑ. Вӗсем пӗтӗм пӗвӗпех утса пынӑ. Хаяррӑн персе тӑнӑ хыҫҫӑн тӑшман Белкин ушкӑнӗ патнех пырса ҫитнӗ.

«Тантӑшсем, малалла!» тенӗ те сержант, тӑшман салтакӗсен ушкӑнӗ ҫине ывтӑннӑ. Вӑл гитлерла офицера чиксе пӑрахнӑ, тапӑннӑ фашиста сирсе янӑ, нимӗҫ пулеметчикне гранатӑпа вӗлернӗ. Пилӗк боец хӑйсен командирӗ ҫывӑхӗнче паттӑррӑн ҫапӑҫнӑ. Кӗске вӑхӑт хушшинчех вӗсем 33 фашиста пӗтерсе тӑкнӑ. Михаил Алексеевич Белкина ҫав кунах Отечественнӑй вӑрҫӑн 1-мӗш степенлӗ орденӗ парса наградӑланӑ.

Артиллеристсем пехотинецсемпе пӗрле ҫапӑҫаҫҫӗ. Вӗсем тӑшман танкӗсен, хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупписен контратакисене сире-сире яраҫҫӗ, тӑшманӑн чул ҫуртсенчен персе тӑракан ушкӑнӗсене пӗтерсе тӑкаҫҫӗ.

Ӗнер кӑнтӑрла тӑшман контратакӑна 26 танк кӗртсе янӑ. Вӗсене пирӗн артиллеристсем вӑйлӑн персе кӗтсе илнӗ. Часах икӗ танк ҫунма пуҫланӑ. Гитлеровецсен машинисем эпир вӑйлӑн пенине чӑтаймасӑр, чул ҫуртсен хыҫне тарса пытаннӑ.

Паян урамсенче кунӗпех хаяррӑн ҫапӑҫрӗҫ. Тӑшман хирӗҫ тӑнине сире-сире пӑрахса, пирӗн ҫарсем малалла куҫаҫҫӗ. Ҫак пулчӗ, анчах кӗрешӳ чарӑнмасть. Взрывсем, ҫутатакан пульӑсем тӗттӗм ҫӗре яр ҫутатса илеҫҫӗ. Штурмлакан ушкӑнсем уйрӑм ҫуртсене, кварталсене гитлеровецсенчен тасатаҫҫӗ.

Б. АФАНАСЬЕВ.

Хӗрлӗ Ҫар генералӗсене, офицерсен, сержантсен тата рядовойсен составне Совет Союз Геройӗн званине пани

Киевран ҫурҫӗртерехре Днепр шывӗ урлӑ ӑнӑҫлӑн каҫнӑшӑн, Днепр шывӗн сылтӑм енче вӑйлӑн ҫирӗпленсе ларнӑшӑн, ҫав ӗҫсенче хастарлӑхпа паттӑрлӑх кӑтартнӑшӑн, СССР Верховный Совет Президиумӗн октябрӗн 16-мӗшӗнчи Указӗ тӑрӑх, Хӗрлӗ Ҫар генералӗсен, офицерсен, сержантсен тата рядовойсен составӗн пысӑк ушкӑнне, Ленин орденӗпе тата «Золотая Звезда» медальпе наградӑласа, Совет Союз Геройӗн званине панӑ.

Совет Союз Геройӗн званине пӗтӗмпе 201 ҫынна панӑ. (ТАСС).

Хӗрлӗ Ҫар генералӗсене, офицерсен, сержантсен тата рядовойсен составне Совет Союз Геройӗн званине пани

Киевран ҫурҫӗртерехре Днепр шывӗ урлӑ ӑнӑҫлӑн каҫнӑшӑн, Днепр шывӗн сылтӑм енче вӑйлӑн ҫирӗпленсе ларнӑшӑн, ҫав ӗҫсенче хастарлӑхпа паттӑрлӑх кӑтартнӑшӑн, СССР Верховный Совет Президиумӗн октябрӗн 17-мӗшӗнчи Указӗ тӑрӑх, Хӗрлӗ Ҫар генералӗсен, офицерсен, сержантсен тата рядовойсен составӗн пысӑк ушкӑнне Ленин орденӗпе тата «Золотая Звезда» медальпе наградӑласа, Совет Союз Геройӗн званине панӑ.

Совет Союз Геройӗн званине пӗтӗмпе 306 ҫынна панӑ. (ТАСС).

Уяв ячӗпе

ШАХАСАН. Районри колхозниксемпе колхозницӑсем тата шкулта вӗренекен ачасем Аслӑ Октябрь уявӗ ячӗпе Хӗрлӗ Ҫарти паттӑр воинсем валли ӑшӑ тумтирсемпе парнесем ярса параҫҫӗ.

Анат Юнтапари Молотов ячӗпе тӑракан колхоз колхозникӗсем ҫак кунсенче 22 мӑшӑр алшиш, 12 мӑшӑр чӑлха, 25 килограмм ҫӑм тата 25 тир пухса пачӗҫ. Вӑрҫӑ инваличӗ Павел Афанасьев пӗр килограмм ҫӑм, 5 тир тата ӑшӑ алшишсемпе чӑлхасем пачӗ.

Атнашри Киров ячӗпе тӑракан, Ухманти «Победа» тата «Ямурза» колхозсем аслӑ уяв ячӗпе паттӑр фронтовиксем валли пыл, тулӑ ҫӑнӑхӗ, аш-какайпа пахча-ҫимӗҫ пухса пачӗҫ.

Шӑхасанти вӑтам шкулта вӗренекенсемпе пионерсем фронтри аппӑшӗсемпе пиччӗшӗсем валли 95 енчӗк, 9 ҫӑмса тутри, махорка, таса хут, карандашсемпе конвертсем нумай пухса пачӗҫ.

Ку ӗҫ районри колхозсемпе шкулсенче сарӑлсах пырать.

Ст. АСЛАН.

Колхозниксен пулӑшӑвӗ

КУКЕҪ. Иккасси ялсоветӗнчи «1-ое мая» колхоз членӗсем фронтовиксем валли ӑшӑ япаласем пухас ӗҫе активлӑн хутшӑнчӗҫ. Ҫак кунсенче 28 мӑшӑр алшиш, 24 мӑшӑр носки, 6 килограмм ҫӑм, 2 мӑшӑр ҫӑматӑ, 8 тир пухнӑ. Ҫав вӑхӑтрах колхозниксем фронтовиксен ҫемьисемпе шкул ачисене пулӑшасси ҫинчен те манмаҫҫӗ. Халӗ вӗсене 7 килограмм ҫӑм, 5 ӑшӑ тумтир, 8 ҫӗлӗк, 12 мӑшӑр алшиш парса пулӑшнӑ. Кӑҫал вӗренӳ ҫулӗ пуҫлансанах, тӑхӑнмаллисем ҫук пирки, 5 ача шкула ҫӳреймен. Колхоз пулӑшу панӑ хыҫҫӑн вӗсем пӗр кун сиктермесӗр шкула ҫӳреҫҫӗ.

Ҫавӑн пекех «Туйҫи», «Красная Звезда» тата Молотов ячӗпе тӑракан колхозра та ӑшӑ япаласем пухас ӗҫ аван пырать. Районӗпе 807 мӑшӑр алшиш, 515 мӑшӑр носки, 620 килограмм ҫӑм, 45 мӑшӑр ҫӑматӑ, 714 тир пухӑннӑ.

Е. ОЗИКОВ.
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.

ЯЛХУÇАЛĂХ ĔÇĔСЕНЕ ВĔÇЛЕМЕЛЛИ ФРОНТОВОЙ УЙĂХЛĂХ

ТЫРПУЛ ХАТĔРЛЕМЕЛЛИ ПЛАНА СРОКЧЕН ПУРНĂÇЛАССИШĔН ТАТА СТАЛИН ЮЛТАШ ПАТНЕ ПУРИНЧЕН МАЛТАН РАПОРТ ПАМА ПРАВО ИЛЕССИШĔН РАЙОНСЕМ ХУШШИНЧЕ ПУÇЛАННĂ СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТУ ОКТЯБРĔН 15-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

(процентпа)

Районсем	Государствăна тырă памалли çулталăкри плана тултарнă
1. Етĕрне	104,5
2. Вăрнар	103,7
3. Сĕнтĕрвăрри	100,2
4. Шупашкар	96,8
5. Канаш	95,6
6. Вăрмар	93,7
7. Куславкка	93,1
8. Калинино	92,7
9. Сĕнтĕр	86,6
10. Советски	86,0
11. Элĕк	85,2
12. Çĕрпӳ	84,2
13. Шăхасан	82,3
14. Октябрьски	79,4
15. Красноармейски	78,7
16. Хĕрлĕ Чутай	78,4
17. Ишлей	77,5
18. Йĕпреç	73,4
19. Улатăр	69,2
20. Елчĕк	69,0
21. Первомайски	68,5
22. Комсомольски	65,8
23. Çĕмĕрле	64,4
24. Тăвай	63,5
25. Кувакино	53,1
26. Чкаловски	52,5
27. Шăмăршă	39,8
28. Пăрачкав	38,7

Комсомолецсем уйăхлăхра

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Комсомолăн «Пчелкино» колхозри пуçламĕш организацийĕ, комсомол 25 çул тултарнă уяв умĕнхи ăмăртăва тата фронтовой уйăхлăха хутшăнса, паха ĕçсем турĕ. Комсомолец Гаврилов ертсе пыракан бригада ыттисенчен малтан авăн çапса пĕтерчĕ, кĕске срокра государствăна тырă парса татрĕ. Комсомолецсен транспорт бригади лайăх ĕçленине пула, колхоз октябрĕн 14-мĕшĕнче государствăна тырă памалли плана пĕтĕмĕшпех тултарчĕ. Çавăн пекех пахчаçимĕçсемпе, çĕрулми те парса татрĕ.

Комсомолецсем ВЛКСМ 25 çул тултарнă уяв ячĕпе фронтовиксем патне парнесем яма хатĕрленеççĕ. Халĕ 20 килограмм тулă çăнăхĕ, 3 килограмм пыл пухнă, 5 уйрăм посылка хатĕрленĕ. Ку тĕлĕшпе ВЛКСМ организацийĕн секретарĕ Трофимов юлташ тăрăшса ĕçленине палăртмалла.

Комсомол организацийĕ уявчен комсомол хуçалăхне йĕркелесе çитерес тата çамрăксене комсомола илес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлет. Çак уйăхра кăна 4 çамрăка комсомола илчĕç. Халĕ комсомолецсем уяв кунĕнче пулакан чаплă каçа хатĕрленеççĕ.

К. МИХАЙЛОВ.

Калинино районĕ государствăна тырă парса татрĕ

Вăрнар, Етĕрне, Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар районĕсенчи колхозсем хыççăн октябрĕн 17-мĕшĕнче Калинино районĕнчи колхозсем те 1943 çулхи обязательствăсем тăрăх государствăна тырă парса татрĕç.

Фронтовой уйăхлăхăн 20 кунхи итогĕсем

Республикăри колхозсенче ялхуçалăх ĕçĕсене хăвăрт вĕçлени çинчен, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен парса татни çинчен Сталин юлташа пуринчен малтан рапорт парассишĕн социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать. Колхозниксемпе колхозницăсем ырми канми ĕçлеççĕ. Ялхуçалăх çулне анăçлăн вĕçлес тĕлĕшпе пуçланнă фронтовой уйăхлăхра нумай районсенчи колхозсем пысăк ӳсĕмсем турĕç. Вăрнар, Етĕрне, Сĕнтĕрвăрри районĕсем государствăна тырă парса татрĕç. Фронтовой уйăхлăхăн иртнĕ пилĕк кунĕ хушшинче Шупашкар районĕ те государствăна тырă парас плана тултарчĕ. Канаш, Вăрмар тата ытти хăшпĕр районсем плана тултарасси патне çывхарса пыраççĕ.

Государствăна тырă памалли плана ВКП(б) Обкомĕн XVI-мĕш пленумĕ кăтартнă срокра пурнăçа кĕртме пирĕн ĕç хăвăртлăхĕсене татах та ытларах ӳстермелле. Уйрăмăнах ку тĕлĕшпе Пăрачкав, Шăмăршă, Чкаловски, Кувакино тата ытти чылай районсен çине тăрса ĕçлемелле. Вĕсен çак çывăх кунсенчех ĕç хăвăртлăхĕсене темиçе хут ӳстерсе, государство умĕнчи обязательствăсене пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртмелле.

Авăн çапас ĕçĕн хăвăртлăхĕсене те татăклăнах ӳстерни кирлĕ. Фронтовой уйăхлăхăн иртнĕ пилĕк кунĕ хушшинчи ĕçсем авăн çапасси вăраххăн пыни çинчен калаççĕ. Уйрăмăнах Тăвай, Октябрьски, Комсомольски районсем кая юлса пыраççĕ. Куславкка, Сĕнтĕрвăрри, Чкаловски тата ытти хăшпĕр районсем те ку тĕлĕшпе мухтанма пултараймаççĕ. Авăн çапас ĕçе хăвăртлатас тесен, колхозсенчи, МТС-сенчи комбайнсемпе тата молотилкăсемпе туллин усă курмалла. Колхозсенчи çынсемпе туртăм вăйне çак ĕçе кирлĕ таранах мобилизацилес пулать.

Пуриншĕн те паллă, кĕрхи çĕртме туни çуртырисен тухăçлăхне ӳстерме май парать. Çакна колхозниксемпе çĕрĕç работникĕсем никамран та лайăхрах пĕлеççĕ. Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхоз кăçал 700 гектар çĕр çинчен гектар пуçне 100-шер пăт тырă пуçтарса кĕнĕ. Çав колхозрах 3-мĕшпе 4-мĕш бригадăсенчи 35 гектар çĕр çинчен гектар пуçне 130-шар пăт илнĕ. Çак çитĕнĕве агротехникăна пурнăçа кĕртнипе тунă. Унта 1942 çулхи кĕркунне тырăсем акмалли пĕтĕм çĕр лаптăкне таранăн сухаласа хăварнă. Çĕртме туни кăçал çу пуçламĕшĕнче уяр çанталăк пулнă вăхăтра тăпрара нӳрлĕх сыхласа хăварма май панă.

Анчах та республикăра кĕрхи çĕртме тăвасси çителĕксĕр пырать. Чылай районсенчи партипе совет организацийĕсем çĕртме тăвасси çине тивĕçлипе çавăрăнса пăхмаççĕ. Çавна пула ĕнтĕ Пăрачкав, Тăвай, Йĕпреç тата ытти чылай районсенче кĕрхи çĕртме тăвасси юлса пырать. Кĕрхи çĕртме ĕçне кая хăварни, вăл тĕлĕшпе плана тултарманни çитес çулхи тырпул тухăçлăхне чакарма пултарать. Çавăнпа та партипе совет организацийĕсен кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе май пур таранах хăвăртлатас пулать. Колхозсенче кĕрхи çĕртме тăвасси мĕнле пынине тĕрĕслесе тухса ĕçри чăрмавсене пĕтермелле. Кĕрхи çĕртме планне çанталăк мĕнле пулнине пăхмасăрах пурнăçа кĕртмелле. Уборка ĕçĕнчен пушаннă тракторсене çĕртме тунă çĕре куçармалла. Государство валли тырă турттарнă çĕрте е ытти питех те кирлĕ ĕçсенче ĕçлемен лашасене пĕтĕмпех çĕртме тунă çĕре ямалла.

Фронтовой уйăхлăх вĕçлениччен шутлă кунсем çеç юлчĕç. Партипе совет организацийĕсен, çĕрĕç оргăнĕсен пĕтĕм вăйсене мобилизацилесе фронтовой уйăхлăха пур тĕлĕшпе те лайăх вĕçлемелле.



Укерчĕк çинче: Вăрнар МТС-ĕн чи лайăх 4-мĕш трактор бригадин трактористчĕ А. Макаров юлташ. Хайпе ылмашăнса ĕçлекен трактористпа пĕрле вăл çак çулталăк хушшинче № 13—Т2Г маркăллă газогенераторлă тракторпа 700 гектар вырăнне 852 гектар ĕçленĕ. Макаров юлташ хăй 350 гектар вырăнне 530 гектар ĕçленĕ, горючие 2.400 килограмм перекетлесе хăварнă.

А. ЛЕМБЕРГ фото-ӳкерчĕкĕ.

Чăваш республикинчи колхозсенче тырпулсене пухса кĕртес ĕçсене вĕçлесси тата кĕрхи çĕртме тăвас ĕç октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне мĕнле пулса пынине кăтартакан

СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Авăн çапнă	Кĕрхи çĕртме тунă
Шупашкар	98,4	64,3
Вăрнар	97,9	71,6
Йĕпреç	94,3	40,4
Шăмăршă	94,2	50,4
Элĕк	93,1	48,1
Ишлей	93,1	31,4
Кувакино	91,9	19,6
Çĕмĕрле	91,1	39,8
Елчĕк	90,0	56,1
Хĕрлĕ Чутай	89,6	42,3
Етĕрне	89,5	61,4
Сĕнтĕр	88,9	52,9
Вăрмар	88,6	45,6
Канаш	88,4	41,4
Красноармейски	87,5	48,3
Советски	87,2	47,6
Çĕрпӳ	87,1	41,6
Улатăр	86,7	42,5
Пăрачкав	86,7	35,1
Шăхасан	86,2	42,6
Первомайски	86,1	59,1
Калинино	86,0	46,1
Чкаловски	85,9	42,1
Сĕнтĕрвăрри	85,6	56,6
Куславкка	85,2	51,9
Комсомольски	84,8	53,0
Октябрьски	81,7	57,9
Тăвай	78,5	39,3
Шупашкар хули	95,0	87,6
ЧАССР тăрăх	89,4	47,1

Кĕрхи çĕртмене кая хăварчĕç

Шăмăршă районĕнчи колхозсен руководителĕсем фронтовой уйăхлăхра кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе пачах çителĕксĕр хакларĕç. Колхоз председателĕсем çеç мар, райçĕрĕç пайĕнче ĕçлекен работниксем те кĕрхи çĕртмене авăн çапса пĕтернĕ хыççăн çеç тытăнасшăн. Вăхăт иртсе пырать, çанталăк сивĕтесси инçе мар. Кĕрхи çĕртме тума паянах кирлĕ пек тытăнмалла.

Октябрĕн 5-мĕшĕпе 10-мĕшĕ хушшинче, фронтовой уйăхлăхăн графикĕ тăрăх, Шăмăршă районĕнчи колхозсен 1.150 гектар кĕрхи çĕртме тумаллаччĕ, анчах вĕсем мĕн пурĕ те 780 гектар çеç сухаланă. Çакă вăл агротехникăллă пысăк мероприятие—кĕрхи çĕртме тăвассине — хакламанни пулать. Кĕрхи çĕртмере кулленех 184 лаша ĕçлемелле, анчах халĕ 148 лашапа çеç ĕçлеççĕ.

Районра «Заря» колхоз çеç кĕрхи çĕртме туса пĕтернĕ. Ку колхозра çак ĕçе пысăк хăвăртлăхпа турĕç. 20 лашапа 14 кун хушшинче 130 гектар сухаларĕç.

Районри ытти колхозсенче те кĕрхи çĕртмене вăхăтра тума май пур, анчах ăна ертсе пымаççĕ. «Труженик» колхоз председателĕ Егоров кĕрхи çĕртме тăвас ĕçпе пачах интересленмест. 8 лаша уйăрса панă, анчах сухаçăсем вĕсемпе тухăçлăн ĕçлемеççĕ. Октябрĕн 14-мĕшĕнче кашни лашапа мĕн пурĕ те 0,35-шар гектар çеç сухаланă

Н. П.

Ют çĕршывсенче

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, октябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: Итали фрончĕн çурçĕрти тата центрти участокĕсенче союзниксен çарĕсем татах малалла куçнă. Халĕ вĕсем тытса илнĕ территорие çирĕплетеççĕ. Камнобассо тата Винькятуро хулисене тытса илнĕ. Вольтурно шывĕ районĕнче тăшман çапплах вăйлăн хирĕç тăрать. Союзниксен çарĕсем çав шыв урлă темиçе кĕпер хывнă. Халĕ çав кĕперсемпе усă курса, союзниксен çарĕсем шыв урлă каçаççĕ, йывăр хĕçпăшал, вăл шутра танксене, шыв урлă каçараççĕ.

Октябрĕн 15-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен Адриатика тинĕсĕнче кĕрешекен эсминецĕсем итальянецсен нимĕçсем тытса илнĕ икĕ суднине атакăланă. Пĕр судни çинче 500 тонна боксит пулнă. Çав суднăна унăн экипажĕ вут тивертнĕ, вара ăна акăлчансен карапĕсем шыва путарнă. Тепĕр суднине—вăтам танкера—тытса илнĕ те гавана илсе кайнă.

ЛОНДОН, октябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, икĕ кун çапăçнă хыççăн американецсен 5-мĕш армийĕ тăшмана Вольтурно шывĕ тăрăхĕнчи позицисенчен нумай тĕлте хĕссе кăларнă. Союзниксен мĕнпур йышши çарĕсен пысăк вăйĕсем çĕнĕрен хывнă каçăсем тăрăх шыв урлă каçаççĕ.

Акăлчансен 8-мĕш армийĕ çаплах хĕвеланăçнелле куçса пырать.

Союзниксен авиацийĕ тăшман транспорчĕ çине, снабжени базисем çине тата чугун çулсем çине бомбăсем нумай пăрахнă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен çарĕсем Италире тата çĕнĕрен 3 хула йышăннă. Союзниксен Вольтурноран çурçĕреллерехре аннă çарĕсем кăнтăртан куçса пыракан çарсемпе пĕрлешнĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, октябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: октябрĕн 14-мĕшĕнче Америка авиацийĕ нимĕçсен Швейнфурт хули çине (Франкфурт хулинчен хĕвелтухăçнерехре) бомбăсем пăрахнă. Тăшманăн 104 самолетне пĕтерсе тăкнă. Америкăн 62 самолет пĕтнĕ.

Октябрĕн 15-мĕшĕнче союзниксен бомбардировщикĕсем тăшманăн Салоника районĕнчи (Греция) аэродромĕсене атакăланă. Бомбăсем тӳремĕнех пырса ӳкнипе ангарсен районĕнче пушарсем тухнă, взрывсем пулнă. Тăшманăн самолечĕсене нумай пĕтерсе тăкнă

ÇУРÇĔР НОРВЕГИРЕ НИМĔÇСЕН БОЕПРИПАССЕМ ТИЕНĔ СУДНИНЕ СИРПĔНТЕРСЕ ЯНĂ

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Швеципе Норвеги пресс-бюровĕ çапла пĕлтерет: Çурçĕр Норвегири Порсангерфиордĕнчи бухтăсенчен пĕринче нимĕçсен 10.000 тонна таякан суднине сирпĕнтерсе янă. Судно çине нимĕçсен аэродромĕ валли турттарса кайма боеприпассемпе бомбăсем тиесе янă пулнă. 122 çын пĕтнĕ.

АВСТРИРЕ ГИТЛЕРЛА ХАЯР ПУÇЛĂХ ХĂРАТАТЬ

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта юлашки вăхăтра илнĕ хыпарсем тăрăх, Австрири гитлерла влаçсем халăх хушшинче сарăлса пыракан пораженилле шухăшсене хирĕç хаяррăн кĕрешеççĕ. Гитлер лартнă Бальдур фон Ширах нумай пулмасть Венăри предприятисем тăрăх çӳренĕ, вăл рабочисем умĕнче сăмах тухса каланă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл «Германи çарĕ кашни каяллла чакмассеренех Германия пĕтрĕ тесе шухăшлакан çынсене» питĕ хăратса каланă.

Рабочисен пĕр пухăвĕнче гитлерла пуçлăхсенчен тепри Шарицер «1918 çулта пулса иртнĕ ĕçсем çинчен» (иртнĕ тĕнче вăрçинче Германи поражени тӳснĕ çул) аса илекенсене хăратнă. Урса кайнă гитлеровец «режима хирĕç калаçакан çынсене» каçарусăр хыттăн тыткалассипе хăратнă.

АРГЕНТИНĂРИ ЛАРУ-ТĂРУ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви Буэнос-Айресран çапла пĕлтерет: Аргентинăн финанс министрĕ Сантамарин, юстиципе çутĕç министрĕ Анайя тата обществăллă ĕçсен министрĕ Галиндес вырăнтан тухнă. Аргентина правительстви вĕсем вырăнтан тухнипе килĕшнĕ. Агентство пĕлтернĕ тăрăх, çав виçĕ министр Аргентинăна тĕнĕл держависемпе çыхăнса тăма пăрахтарасшăн пулнă.

«Нью-Йорк таймс» хаçат корреспонденчĕ Буэнос-Айресран çапла пĕлтерет: çĕрĕç министрĕ Массон та вырăнтан тухнă, тет.

ВĂРÇĂ ХЫÇÇĂН США-н ТУЛАШРИ ПОЛИТИКИ МĔНЛЕ ПУЛМАЛЛИ ÇИНЧЕН АМЕРИКА СЕНАЧĔН ПОДКОМИССИЙĔ ЙЫШĂННĂ РЕЗОЛЮЦИ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви Вашингтонри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: сенатăн ют çĕршыв ĕçĕсене пăхса тăракан комиссийĕн подкомиссийĕ вăрçă хыççăн Пĕрлешӳллĕ Штатсен тулашри политики мĕнле пулмалли çинчен резолюци йышăннă; çав резолюцишĕн 7 çын, ăна хирĕç пĕр çын сасă панă.

Çав резолюцире çапла каланă: «Пĕрлешӳллĕ Штатсен сеначĕ çапла йышăнать: пирĕн мĕнпур тăшмансене хирĕç пыракан вăрçă тăшмансене пĕтĕмпех çĕнтеричченех пымалла. Тĕрĕслĕхлĕ тата хисеплĕ мир тăвас тĕлĕшпе Пĕрлешӳллĕ Штатсем хăйсен вăрçăри юлташĕсемпе килĕштерсе ĕçлемелле; Пĕрлешӳллĕ Штатсем, хăйсен конституцийĕ хушнă тăрăх ĕçлесе, ирĕклĕ нацисемпе пĕрле агрессие чарса тăма тата пĕтĕм тĕнчери мире сыхласа тăма пултаракан пĕтĕм тĕнчери орган туса хурса, ăна тытса тăмалла».

США сеначĕн ют çĕршыв ĕçĕсене пăхса тăракан комиссийĕ çак резолюцие çитес эрнере пăхса тухать

ГЕРМАНИ ПОРТУГАЛИЕ ЮНАНИ

ЖЕНЕВА, октябрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Германин информаци бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, Германи правительстви Португали правительствине «чи хаяр протест» панă. Германи правительстви çав протестра Португалия Англие Азор утравĕсем çинчи çар базисемпе усă курма ирĕк панине хирĕçлесе çырнă. Нотăра Португалие çапла юнаса çырнă: «Азор утравĕсем çинчи лару-тăру улшăннă пирки Германи правительстви кирек мĕнле кирлĕ ĕçсем те тума ирĕклĕ,» тенĕ.

КĔСКЕН

● Римра апат-çимĕç нумай çитмест. Халăха шыв сахалтарах памалла тума шутлаççĕ

Римри халăх гитлеровецсем туса пыракан ĕçсене вăйлăн хирĕç тăрать. Хула урамĕсенче нимĕçсемпе итальянецсем хушшинче час-часах тытăçусем пулса иртеççĕ. (ТАСС).

● Азор утравĕсем тĕлĕшпе тунă килĕшӳ тăрăх, Англи Португалие икĕ судно панă.

● Француз нацине ирĕке кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен комитет «Француз халăхĕ нимĕçсене хирĕç тăмалли заем» кăларнă. Заем облигацийĕсем тăрăх пуçтарăнакан укça-тенкĕ пĕтĕмĕшпех Францире нимĕçсемпе кĕрешекен патриотсен организацийĕсене хĕçпăшал парса тăрас ĕçе каять.

● Вăрçă пуçланнăранпа мĕнпур вăрçă фрончĕсенче Австрали 61.564 çын пĕтнĕ.

● 1940 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1943 çулхи сентябрь уйăхне çитиччен Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем вăрçă нушисем валли 131 миллиард доллар расходланă. Сентябрь уйăхĕнче вăрçă нушисем валли США 7 миллиард та 212 миллион доллар пĕтернĕ, вăл август уйăхĕнчинчен 4 процент сахалтарах пулать.

Фронтран килнĕ çыру

Урнă йытăсем

Эпĕ халь кăна Богдановка ялĕнчен таварăнтăм. Виçĕмкунччен вăл ялта 372 кил пулнă. Халь пĕтĕмпе те 15—20 кил çеç юлнă,—ĕнер каç ăна чакса каякан нимĕçсем çунтарса янă. Факельщиксем килтен киле çӳренĕ, пӳртсене бензин сапа-сапа тивертнĕ,—çитменнине ялçыннисене пĕр япала та илсе тухма паман. Совет çыннисене нимĕçсем малтан пурне те ял хыçне хăваласа кăларнă та, пӳртсене юлнă пахарах япаласене çаратнă хыççăн, çунтарма тытăннă. Пушар патне никама та çывăха яман, пыма тăракансене автоматсенчен пенĕ...

Халь вара çак пĕр ялтах 350 çемье кил-çуртсăр, тумтирсĕр, çаппа-çарамас тăрса юлнă. Эп куртăм вĕсене. Вĕсем тăван килĕсем пулнă вырăнсенчи кĕл ăшĕнче чакаланаççĕ—мĕн те пулин юлман-ши, тесе шыраççĕ. Анчах нимĕн те юлман çав. Ытла та тĕплĕн çунтарса янă вĕсен пурлăхне Гитлерăн хурахĕсем!

Пин тĕслĕ тискер ĕçсем тунă ку вырăнсенче нимĕç фашисчĕсем.

Ивот ялне пырса кĕнĕ чух эпир никамран малтан пĕр вăтă карчăка куртăмăр. Вăл хăйĕн çунса пĕтекен пӳрчĕ умĕнче макăрса тăратчĕ.

— Ан йĕр, кинемей,—лăплантарма пикентĕмĕр эпир ăна,—вăрçă пĕтсен çĕнĕ пӳртсем те, пурлăх та пулĕ.

— Эп пӳрт пирки макăрмастăп, — терĕ вăл, — нимĕçсем паян ирхине манăн пĕртен-пĕр хĕре хăйсемпе пĕрле хăваласа кайрĕç... Эпир ирĕке тухрăмăр ĕнтĕ, ман хĕрĕн çаплă чуралăхра пулма тивет. Çавă çунтарать манăн ăшчике!

Кайран пĕлтĕмĕр: Хĕрлĕ Çар çывхарсах килме пуçласан, ку ялта тăнă нимĕçсем ĕçлеме пултаракан çынсене пурне те, 13—15 çулхи ачасенчен пуçласа 50—55 çулхи стариксем таранччен, хăваласа кайма тапратнă. Нумайĕшĕсем унталла-кунталла тарса пĕтнĕ, ăçта май килнĕ, çавăнта пытаннă, хăшĕсене тăванĕсем çĕр айне — шăтăк алтса, çиелтен тăпра сапса — пытарнă, анчах çапах та чылай çынсем хăтăлайман, вĕсене фашистсем выльăхсене хăваланă пекех пушăсемпе, пагаксемпе, прикладсемпе çапа-çапа хĕвеланăçнелле хăваласа кайнă.

Ку ялта халь çын питĕ сахал юлнă. Арçынсем пачах та çук. Арçынсене нимĕçсем иртнĕ хĕллех пĕтерсе хунă. Яла пырса кĕрсенех, вĕсем кунти мĕнпур арçынсене пухнă та, вĕсенчен 380 çынна пĕр кунтах персе пăрахнă. Кашни килтех 2—3 вилĕ пулнă.

Пĕр килте эпир 7 çулхи Ваня ятлă ачапа калаçрăмăр.

— Аçу ăçта? — ыйтрăмăр унтан.

— Нимĕçсем вĕлернĕ, — терĕ вăл хурлăхлăн.

— Пиччӳ ăçта?

— Ăна та нимĕçсем вĕлернĕ.

— Тата кама вĕлернĕ нимĕçсем?

— Пирĕн асаттене вĕлернĕ, Мишкăсен ашшĕне, Вовкăн пиччĕшне...—йĕркипех калама тытăнчĕ вăл. Унăн куçĕсенче шултăра куççулĕсем чĕтресе тăраççĕ. Çав куççульсене нихăçан та манас çук эпир, каçарас та çук. Вĕсемшĕн хаяррăн тавăрма çеç пулать!

Тепĕр пысăк салара нимĕçсем татата хăрушăрах, тата тискертерех ĕçсем тунă. Пĕр карчăк пĕртен-пĕр ывăлĕпе пурăннă. Вăл — инвалид,—çуралнă чухнех унăн хăрах ури сиенлĕ пулнă, çавăнпа ăна Хĕрлĕ Çара та илмен. Ăна нимĕçсем хăйсене майлă çавăрса ĕçлеттерме хăтланнă. Анчах та çак çирĕп чĕреллĕ совет патриочĕ тискер тăшмансен тарçи пулма килĕшмен. Вара нимĕçсем, ăна хăйсен килхушшинче хăйнех шăтăк алттарса, вăтă амăшĕ умĕнчех персе пăрахнă.

Ялти темиçе çемьере партизансем пурри пирине пĕлсен, фашистсем вĕсене тусме çук хĕсĕрлеме тытăннă, епле пулин те партизансем çинчен сведенисем пĕлме тăрăшнă. Усси пулман, партизансем çинчен нимĕçсене никам та пĕр сăмах та каламан. Вара урса кайнă Гитлер йыттисем, çав темиçе партизан çемьисене пĕр пӳрте хăваласа хупса, чĕрĕнех çунтарса янă.

Хĕрлĕ Çар хĕсе килнĕ пирки ялтан тарма вăхăт çитсен, хăйсен пуçĕсене çăлласшăн пулса, гитлеровецсем çăкăн пек тискер «меслет» шухăшласа кăларнă. Вĕсем ялти пĕтĕм халăха шатаксемпе, кашкăр пек çĕнчарка-йытăсемпе хăваласа, мăнçул çине илсе тухнă. Çул варрипе нимĕçсен колонни — салтаксем, машинăсем, лавсем шунă, çулăн икĕ енĕпе — совет çыннисем, хĕрарăмсемпе ачасем. Çапла майпа вĕсем хăйсене совет самолечĕсем тапăнасран хăтарма шутланă. Анчах пирĕн конниксемпе пехотинецсем хуса çитме пуçласан, çав хĕрарăмсемпе ачасем çине нимĕçсем гранатăсем пăраха-пăраха, автоматсенчен персе вĕлерсе тарма тапратнă. Анчах нумаях тарайман, пирĕн подразделенисем вĕсен çулне пӳлсе лартса, пурне те тенĕ пекех пĕтерсе тăкнă.

Эпĕ кунта уйрăм фактсене çеç илсе кăтартрăм. Вĕсем çинчен вĕçĕ-хĕррисĕрех çырса кайма пулать. Халĕ, Хĕрлĕ Çар çите-çите çапнине тӳсеймесĕр, пĕрмаях чакса кайма тӳр килнипе, нимĕç фашисчĕсем пушшех урса кайрĕç. Вĕсем хăйсем кунта урăх нихăçан та ура ярса пусас çуккине сисеççĕ. Вĕсен тискерлĕхне нимĕнпе те танлаштарма çук. Вĕсем совет çĕрĕсене «пушхир вырăнĕсем» (зона пустыни) туса хăварасшăн тăрăшаççĕ. Анчах шăписем тулаççĕ ĕнтĕ. Темле тискерленсен те, тем пек урса хăтлансан та. вĕсем пирĕн хăватлă наступленине чарма пултарас çук.

Совет çĕрне Гитлерăн урнă йыттисенчен тасатса çиерес сехет çывхарнăçемĕн çывхарать!

Писатель-фронтовик ЛЕОНИД АГАКОВ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ

ШУПАШКАРТИ ЭНЕРГЕТИКА ТЕХНИКУМĔ строительство тата дизель отделенийĕсен 2-мĕш курсне, теплотехника тата дизель отделенийĕсен 3-мĕш курсне вĕренме кĕрес текенсен заявленийĕсене халĕ те йышăнать.

Ку курссене вăтам шкултан вĕренсе тухнисене, вăтам шкулсен 9 класне вĕренсе пĕтернисене, рабфаксенчен, çитĕннисен шкулĕсенчен вĕренсе тухнисене илеççĕ. 2-мĕш курса тата строительство техникумĕсен 4-мĕш курсне вĕренсе пĕтернисене, анчах та мĕнле те пулин ăставпа строительство техник мĕнче малалла вĕренме май килмен пирки унтан тухса кайнисене те йышăнаççĕ.

3-мĕшпе 4-мĕш курссенче вĕренекен студентсене Хĕрлĕ Çара илмеççĕ.

Лайăх вĕренсе пыракан студентсене, хăш курсра вĕреннине кура, уйăхне 80 тенкĕрен пуçласа 140 тенкĕ таран стипенди параççĕ. Чаплă вĕренекенсене стипенди ыттисенчен 5 процент ытларах параççĕ. Студентсене продуктсем рабочисемпе пĕр танах параççĕ.

Ялсенчен е ытти хуласенчен килсе кĕнĕ студентсене техникум общежитине вырнаçтарать, выртса тăма тӳшек-минтерсем парать.

Заявленисене çак адреспа памалла: гор. Чебоксары, угол улиц Чернышевского и Розы Люксембург, дом № 1/4) здание школы № 6.

ÇАК ĔÇСЕНЕ ПĔЛЕКЕН СЛУЖАЩИСЕМ КИРЛĔ: транспортпа сбыт начальникĕ, сбыт диспетчерĕ, бухгалтер тата секретарь.

Условисем çинчен çак адреспа пĕлмелле: гор. Чебоксары. Канаш кал. 21, Чувашская республиканская контора Главзаготскот Центра. Телефон 3—16.

ЧĂВАШДРЕВПРОМСОЮЗА плановик-экономистсем, экономист-финансист, финанс отделĕн начальникĕ, бухгалтерсем, пăрман хатĕрлес ĕçе пĕлекен инженер, йывăç сурас ĕçе пĕлекен инженер, йывăç каскалас ĕçе пĕлекен инженер, ял хуçалăхне пĕлекен инженер, çавăн пекех тата бухгалтер, плановик, статистик ĕçне вĕренес текен ученикĕсем кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Заводская, 12. 1—1

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23

...полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф-6 53 84 п. л.